# Вера АРХИПОВА: Юрату – хи

**Пуш уйăхĕнчи номерĕн «Самант» хăнине нумайăшĕ Чăваш наци библиотекинчи «Мерчен» юрă-кĕвĕ тĕпелĕн (музыкальная гостиная) ĕçĕ-хĕлĕпе пĕлеççĕ. «Мерченĕн» тараватхуçи Вера Архипова – искусствăпа литература пайĕнче информаципе тивĕçтерекен тата массăллă ĕçшĕн яваплă тĕп библиотекарь. Вулавăш картипе кăна çырлахмасть вăл – хула тата республика шайĕнче нумай енлĕ тата тĕлпуллевлĕ ĕçсене йĕркелесе ертсе пырать. Чăваш наци конгресĕнче вăл – Культура комитечĕн председателĕ. Хаçат-журналта та тăтăшах пичетленет, радио тата тележурналистикăра та палăрнă. Вера Севастьяновна – Раççей Федерацийĕн журналисчĕсен союзĕн членĕ, Нестер Янкас, Алексей Талвир ячĕллĕ премисен лауреачĕ.**

Унăн пуçарăвĕпе йĕркеленĕ ĕçсен спискĕ темĕн вăрăмăш. Вĕсем хула, республика, регион, Раççей шайĕнче кăна иртмеççĕ, пĕтĕм тĕнче шайĕнчи ĕç-хĕлпе те палăрнă Вера Севастьяновна. Сăмахран, «Сергий Радонежский таса çынпа пĕрле ирттернĕ çулталăк, е Православипе 365 хут тĕл пулни» проекта Пĕтĕм тĕнчери «Православи инициативи» грант конкурсĕ те ырларĕ. Нумаях пулмасть акă Наци библиотекинче Асламассен династине халалланă тĕлпулу-концерт иртрĕ, унта Алексей Анисимович Асламас ачисем – Чехири Брно хулинчи консерватори преподавателĕсем, тĕнчипе паллă музыкантсем Алексейпе Антон Асламассем, Алексей Анисимович мăшăрĕ Инна Игоревна хутшăнчĕç.

**– Вера Севастьяновна, эсир тĕрлĕ шайри фестивальсем, конкурссем, презентацисем, куравсем, тĕлпулусем, семинарсем, паллаштару тата пултарулăх каçĕсем йĕркелетĕр, пултарулăх ушкăнĕсемпе, шкул ачисемпе те хастар ĕçлетĕр, çапах та Сире чи малтан «Мерчен» тĕпелĕн хуçи пек пĕлеççĕ. «Мерчен» кĕтречĕ культурăна, искусствăна, ӳнере, чунлăха, чăвашлăха /халăхлăха/ пĕр тĕвве çыхса пĕрлештерет. Вăл малтан Наци вулавăшĕн феноменĕччĕ, халĕ вара республика мухтавĕ: Чăваш Ен культура пурнăçĕ «Мерченсĕр» пулма пултараймасть! Тăван тата Раççей культурин çăтмах сачĕ тесех хакламалла ăна. Юрă-кĕвĕ тĕпелĕ мĕнле пуçланнине аса илтерĕр-ха вулакансене.**

– «Мерчен» Чăваш Республикин композиторĕсен Ассоциацийĕ, Чăваш Республикин композиторĕсен Союзĕ, Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн искусствоведени уйрăмĕ, Чăваш Наци Конгресĕ хутшăннипе 2012 çулта уçăлчĕ. Çак ĕçре мана хастар пулăшнăшăн, халĕ те пулăшса пынишĕн ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ С.И. Макаровăна, музыка тĕпчевçине М.Г. Кондратьев профессора,
ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н.Н. Казаков композитора чĕререн тав тăватăп. Юрă-кĕвĕ тĕпелĕн ĕçĕ-хĕлĕн тематики анлăлансах пырать, унăн авторитечĕ те ӳснĕçем ӳсет. «Мерчене» Раççей шайĕнче те лайăх пĕлеççĕ.

**– Эсир ытти регионри, Пĕтĕм Раççейри, Мускав-Питĕрти конференцисене, съездсене, форумсене хутшăнатăр, докладсем тăватăр. Çакăн пек пултарулă та хаклă хăна хăш районтан пулнине пĕлмесĕр чăваш чунĕ те, ăсĕ те лăпланмасть: пирĕн менталитет çавăн пек!**

– Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче çуралса ӳснĕ. Атте, Севастиан Михайлович, шкул директорĕ пулнă. Анне, Ольга Александровна, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Вăл шкулта фольклор ансамблĕ йĕркеленĕччĕ, унта ватти-вĕтти çӳретчĕ. Районти ялсене те концертпа каяттăмăр. Атте çыравçăсемпе, ӳнерçĕсемпе, артистсемпе, республикăри паллă çынсемпе туслăччĕ. Вĕсене шкула тĕлпулăва яланах чĕнетчĕ. Кам кăна килместчĕ пирĕн пата?! Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов хăнара пулни халĕ те асра. Паттăр летчик чăваш улăпĕ пекех туйăнчĕ мана. Шупашкартан килнĕ кашни çыннах çăлтăр çинчен аннăн йышăнаттăмăр ун чухне. Чи асра юлнă çын – Герасим Харлампьев-Пилеш çыравçă тата ӳнерçĕ. Питĕ илĕртӳллĕ калаçма пĕлетчĕ, хавасланăхĕпе, ăшă куллипе тыткăнлатчĕ. Мĕн ачаранпах тăван культурăн чĕрĕ юхăмĕнче «ишнĕ» эпĕ.

**– Хăварăн ачăрсемпе кĕскен паллаштармăр-и?**

– Икĕ ача манăн: асли – Янина, кĕçĕнни – Максимилиан. Хĕрĕм педагогика университечĕн ӳнерпе графика факультетĕнчен вĕренсе тухрĕ, дизайнер. Ывăлăм та çак университетра вĕренчĕ – патшалăх муниципалитет органĕсене ертсе пырас енĕпе. Халĕ вара тепĕр аслă пĕлӳ илет – журналистика факультетне кĕчĕ.

**– Ача чухне сире мĕнле професси илĕртнĕ?**

– Икĕ ĕмĕтчĕ манăн. Геолог пулас ĕмĕтлĕччĕ, аслă тăван çĕршывăн тăрăхĕсене çитес, тĕрлĕ сăрт-ту урлă каçас килетчĕ. Çĕр айĕнчи пуянлăхсем мана кĕтсе тăнăнах туйăнатчĕ. Çул çинче тĕл пулакан йывăрлăхсене çĕнтерес шутлăччĕ: «Кĕрешмелле те шырамалла, тупмалла та парăнмалла мар!» девизпа ӳснĕ пирĕн вăхăтри çамрăксем.

Тата тухтăр ĕçĕ те чуна сывăхчĕ. Çак профессие кăмăлласси çынсене пулăшас туртăмпа çыхăннă. Шурă халатлă çынсем чи пархатарлă ĕçпе пурăнаççĕ тенĕ. Тĕрĕсех ĕнтĕ ку. Радиопа-телевизорпа «Люди в белых халатах» юрра илтсен куççуль тухатчĕ. Анчах пурнăç сукмакĕ урăхла хывăнчĕ. Аттестат алла илсен Хусанти Культура институтне вĕренме кĕтĕм.

**– Аслă шкултан вĕренсе тухсан малтанхи утăмсене ăçта тунă?**

– 1985 çулта институт дипломне илсен Шупашкарти Корней Чуковский ячĕллĕ ача-пăча библиотекинче ĕçлеме пуçларăм. Тĕп библиограф пулнă май кĕнекесене шута илсе формулярсем çырса ларма тиветчĕ, хамăн вара çынсемпе ĕçлес, мероприятисем ирттерес килетчĕ. Чунра энтузиазм вĕресе тăнă. Çĕнĕ кĕнекесен хăтлавĕсене /презентацисене/ йĕркелеме пуçларăм. Ачасем йышлăн пуçтарăнатчĕç, интереслĕччĕ вĕсене. Тĕрлĕ темăллă тĕлпулусем ирттерме тытăнтăм. Ун чухне патшалăх чиркӳ, православи тĕнне урăхларах йышăнатчĕ. Эпĕ вара тĕлпулусене пачăшкăсене те хутшăнтараттăм. Вăл вăхăтшăн самай хăюллă утăм ку. «Пирĕн пата Вера Севастьяновна килсен библиотека ĕçĕ уçăлсах кайрĕ», – тетчĕ Елена Федоровна Васильева, методикăпа библиографи уйрăмĕн ертӳçи. Тăрăшнă, ӳркенмен, ĕçе кура хисепĕ те – мана, çамрăк специалиста, хваттерпе тивĕçтерчĕç.

**– Шкулта вĕреннĕ чухне Герасим Харлампьевпа тĕл пулни чи асра юлнă пулсан, Наци библиотекине ĕçлеме куçсан кам ытларах тĕлĕнтерчĕ?**

– Республикăн аслă вулавăшĕнче 2005 çултанпа ĕçлетĕп. Библиотекăна пыракан кашни çынах интереслĕ маншăн. «Мерчен» юрă-кĕвĕ тĕпелĕн хăнисем вара – Чăваш Ен мухтавĕ, Раççей культурин пуянлăхĕ. Çапах та Праски Витти ӳнерçе ыттисенчен уйăратăп. Манăн пурнăçăн çĕнĕ çаврăмĕ Виталий Петрович Петров пултарулăхĕнчен пуçланчĕ. Библиотека «Кĕмĕл ĕмĕр» ярăма пурнăçа кĕртме пуçăнчĕ. Çак проектри манăн малтанхи курăмлă ĕç Праски Витти çинчен хатĕрленĕ электрон дискĕ пулчĕ. Питĕ кăсăклă тытăнчĕ çак ĕç. Мана компьютер умне лартрĕç. «Акă клавиатура, акă «А» саспалли, ăна пусатăн та – «А» саспалли экран çине тухать. Ыттине вара хăвах вĕренетĕн», – тесе ăнлантарчĕç. Хăнăхрăм вĕт компьютерпа ĕçлеме! Диск хатĕрленĕ май Праски Виттипе те, унăн мăшăрĕпе, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕпе Лидия Михайловнăпа та, сывăх паллашрăм. Праски Витти тĕлĕнмелле интереслĕ çын: анлă тавракурăмлă, таран

# ре-хирĕçлĕхсен килĕшĕвĕ, пулма пултарайман чăнлăх!

пĕлÿллĕ, питĕ интеллигентлă, корректлă, ырă кăмăллă, хавасла – вут та пăрăç! Вăл нихăçан та нимĕнле ĕçрен те ÿркенмест. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче челноксемпе /харпăр сутуçăсемпе/ чикĕ леш енне те тухса çÿренĕ, ют çĕршывсенче хăйĕн инициативипе ÿнер куравĕсем irttернĕ. Мĕнлерех маттурлăх, вăй-хăват! Виталий Петрович выставкисене мĕнле хакланине Турцие, Японие, Америкăна ыйтса янăччĕ. Курав буклечĕсене, ÿнерçĕ çинчен пичетре мĕн çырнине ярса пачĕç чăнах та. Çавăнтанпа хамăн ĕçре чикĕ леш енчи ĕçтешсемпе çыхăнсах тăратăп. Праски Виттин пултарулăхĕ, унăн вĕресе тăракан пурнăçĕ маншăн иккĕмĕш аслă шкул выраннех пулчĕ.

Çакна та палăртасшăн: тăван культурăра, искусствăра палăрнă кашни çынах тĕлĕнмелле личность. Вĕсен пултарулăхĕ культурăна çĕç мар, чăвашлăха, пурнăçа малалла аталантарать.

**– Эсир чăваш арçынĕсемпе хĕрарăмĕсене пĕтĕмĕшле мĕнле хаклатăр?**

– Чăваш арçынĕн кăштах мĕскĕнлĕх пур. Ăна пĕтермеллех. Çемьере унăн хуçа пулмалла. Кăшкăрашакан-ятлаçакан çын пирки мар сăмах, арăмĕн тĕрекĕ, шанчăкĕ, ачисене пур ĕçре те тĕслĕх паракане, пурнăçа вĕрентекенĕ çинчен калатăп. Пирĕн арçынсене воспитани те кăштах çитмест. Ытти тăрăха кайсан унти арçынсем хĕрарăмсене ытларах хисеплени сисĕнет.

Чăваш хĕрарăмĕсем те черченлĕхрен, ачашлăхран писеççĕ. Нумай чухне вĕсем çемье пусĕ выранĕнче. Хĕрарăмсем хăватланса, маттурланса пыраççĕ, сиксе тухакан ыйтусене мăшăрĕсемсĕрех татса параççĕ. Хĕрарăм бизнес-леди пулса тăрсан чылай чух ăна упăшки чăрмантарать кăна. Паянхи кун чăваш социумĕнче арçын авторитечĕ чакать, хĕрарăмсен яваплăхĕ ÿсет.

Чăваш арçынĕсемпе хĕрарăмĕсем паянхи культурăра, халăх пурнăçĕнче хальлĕхе хăйсен выранне тупайман пек туйăнать. Самана улшăнсах тăрать, кĕтменлĕхсем кашни кунах, çавăнпа унчченхи социаллă модельсем питех ĕçлемеççĕ. Арçынпа хĕрарăм халăх пурнăçĕнче хăйĕн выранне тупайманни малашлăха та пысăк витĕм парать: çак условисенче чăвашлăх такăнать.

**– Паянхи пурнăçра çемье институчĕ те уксахламасть-и?**

– Уйрăлакан мăшăрсем питĕ нумай – кун пирки калаçар та мар. Халĕ тата хут уйăрттармасăр пурăнни – граждан бракĕ – «модăра». Çак пулăм ним çук



Сăнÿкерчĕкре малти ретре сулахайран сылтăмалла: Янина, унăн мăшăрĕ Александр, вĕсен ачи Максим; иккĕмĕш ретре: Татьяна /Вера Севастьяновнăн шăллĕн хĕрĕ/, Дмитрий /кĕрĕвĕн шăллĕ/, Светлана Анатольевна /кĕрĕвĕн амăшĕ/, Вера Севастьяновна, Максимилиан, Анастасия.

çĕртен сиксе тухманнине социологи енчен те, экономикăпа çыхăнтарса та лайăх ăнлантарма пулать. Çапах та йышăнмалла: çамрăксем хут уйăрттармасăр пурăнни – чунлăх кризисĕ. Юрату та девальвацие лекрĕ! Туйăмсен романтики йÿнелчĕ. Ку, паллах, вăхăтлăх япала. Чунлăх хăвачĕ ниçта та çухалман, хамăр кăна аталану сукмакĕнчен пăртак пăрăннă. Кăштах аташса илни те кирлĕ, хурапа шурра кăна мар, ытти тĕсе танлаштарма вĕренни мĕне тăрать!

**– Юратусăр пурнăç çук апла?**

– Маншăн пурнăçра юрату яланах пĕрремĕш выранта. Чунра юрату пулмасан – пурнăç хĕвелĕ сÿнет те çын тĕксĕм нимсуклăхра асапланать. Пултарулăх, аталану, телей, малашлăх – пурте савăклăх туйăмĕпе çыхăннă. Манăн кун-çул чуппинче йывăрлăхсем тăтăшах пулчĕç пулин те хама телейлĕ çын тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен чун вут пек çунса тăракан юратупа тĕл пулнă, унăн асамлăхĕнче чечекленнĕ. Чăн-чăн юрату тарăнлăхне вара тĕнче уçлăхĕпе çеç танлаштарма пулать. Кашни çын пултараймасть хĕвел вучĕллĕн юратма – çакна асăрхаттармалла та йышăнмалла. Савнă çыншăн çунса тăракан вутта кĕме те, пăрлă шыва сикме те хатĕрччĕ эпĕ. Вилесле юратнă эпир пĕр-пĕрне.

**– Юратăва мĕнлерех хаклама пулать?**

– Теменле тарăн юратăвăн та икĕ вĕçĕ пур. Вăл хавхалантарать, чуна çунатлантарать, çав вăхăтрах асаплантарать те. Пĕр-пĕрне чăтма çук юратсан та чĕрене ыраттараканни яланах тупăнса пырать. Çакă ĕнтĕ вăл юрату асамлăхĕ. Çак асам чуна туптать, çынна çын тăвать: юрату вутне лексе курмасăр, куççуль тăкмасăр пурнăç техĕмне те туймастăн, ырăпа усала та пĕлсе çитейместĕн.

Юрату вăл – мăшăр çунат. Хĕвеллĕ тÿпере те ыткăнатăн, аçа çапса çăвакан çумăр айне те лекетĕн, юрлă-пăрлă çилтăман витĕр те вĕçетĕн. Юрату пушхире те чечеклентерет, çутçанталăк вара тĕлĕнмелле ачаш та хитре кĕвĕпе тулать. Этемлĕхе те урăхларах йышăнатăн: кашни çын ырă пирĕшти пекех туйăнать. Юрату тĕнчери чи ырри те хитри – çынна Турă патне çывхартать вăл. Хире-хирĕçлĕхсен килĕшĕвĕ, пулма пултарайман чăнлăх вăл юрату.

**– Пурин те астуса юлмалла ку сăмахсене. Юрату пĕрремĕш выранта пулсан, иккĕмĕш выранта мĕн?**

– Ĕçе юратни, унпа киленни. Тăван халăхăн тĕлĕнмелле культури чуна та, ăса та савăнтарать. Мĕнле хевтетермене тытса тăрать вăл. Ламран лама пуçтарăнса тутпаннă çак хăватăн хĕлхемĕсене çынсене кăтартма пултарни – чăн-чăн савăнăç.

**– Çитĕнÿ те ăнăçу сунатпăр Сире.**

– Тавтапуç!

**В. Степанов калаçнă**